28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 6 ЫТЛАРИКУН 216 (6967) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕн, Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемшĕн тăрăшасси мĕнпур совет патриочĕсен таса тивĕçĕ пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсен çемьисемшĕн пĕтĕм халăхпа тăрăшар!

(ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ ПУЛНĂРАНПА 28 ÇУЛ ÇИТНЕ ТĔЛЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕНЧЕН).

Аслă Октябрь уявĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине кăçал пирĕн çĕршыври халăхсем мирлĕ лару-тарура кетсе илеççĕ. Кăçалхи уяв кунĕсем уйрăмах хавасла. Эпир, тăватă çул хушши хамăр аслă Тăван çĕршывăн ирĕклехепе чыслăхĕшĕн кĕрешсе, кăçалчченхи Октябрь уявĕсене вăрçă вăхăтĕнче палăртса пытăмăр. Пирĕн совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсемпе Японин империалисчĕсене çĕнтерчĕ. Совет халăхĕн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ тăшмана Хĕвеланăçĕнче те, Хĕвелтухăçĕнче те çапса аркатрĕ. Халĕ ĕнтĕ юратнă Тăван çĕршыв çине çав икĕ енчен тапăнас хăрушлăх ĕмĕрлехех пĕтрĕ.

Большевиксен аслă партийĕн Центральный Комитечĕ хăйĕн чĕнĕвĕсенче çапла каларĕ:

— Фашистла нимĕç империалисчĕсемпе Японин империалисчĕсене çĕнтернĕ аслă совет халăхне мухтав!

— Октябрьти Социализмлă Аслă революцие çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе хăварнă тата тăшмана аркатса тăкнă паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!

Çав сăмахсем пирĕн нумай нациллĕ çĕршывра мĕнпур халăхсен чĕлхисемпе янăраса кайрĕç.

Паттăр Хĕрлĕ Çар, ирсĕр тăшмансене çапса аркатса, мĕнпур этемлĕхе агрессорсен чуралăхĕнчен çалса хăварчĕ, тĕнче цивилизацине фашистла тискерлĕхрен хăтарчĕ.

Октябрьти революцире çуралнă Совет государстви чи хаяр тĕрĕслеве тӳссе ирттерчĕ. Кун пек йывăр тĕрĕслеве тĕнчере пĕр государство та тӳссе ирттереймен пулĕччĕ. Совет халăхĕ çак иртнĕ вăрçăра ĕмĕрне иксĕлми хăватлă çăлкуçĕсенчен вăй илсе тăчĕ. Çав çăлкуçĕсем вĕсем—Октябрьти революцире çуралнă совет стройĕ, совет çĕрĕ çинче ӳссе чечекленнĕ халăхсен туслăхĕ, пирĕн Тăван çĕршыва çĕнтерӳсем патне большевиксен аслă партийĕ, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыни пулса тăраççĕ.

Çак иртнĕ 28 çул хушшинче пирĕн чăваш халăхĕ те, çĕршыври ытти тăванла халăхсем пекех, улăпла ӳссе çитĕнчĕ. Аталану çулĕпе вăл хăватлăн та хăюллăн малалла утать. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пирĕн чăваш халăхне ĕмĕрхи чуралăхран кăларчĕ, вилес шăпаран хăтарчĕ. Октябрьти революци пирĕн халăха çĕрпе мир, ирĕклĕхпе этем тивĕçлĕхĕ пачĕ. Пурнăç çăлкуçĕ парса тăракан çĕр, çĕр çинчи тата çĕр айĕнчи пуянлăхсем, вăрмансемпе шывсем, улăх-çарансем пĕтĕмĕшпех халăхăн пулса тăчĕç.

Авалхи сĕм вăрмансенче, армути кашласа ларнă пушхирсенче сталинла индустри чаплă корпусĕсем ӳссе ларчĕç. Ĕлĕк чăпта станĕпе çапата калăпне кăна пĕлнĕ чăваш çамрăкĕсем кучухнехи кăткăс техникăна вĕренсе алла илчĕç; вĕсем халĕ чаплă станоксем умĕнче стахановла ĕçĕн пала тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Ĕлĕк сухапуçĕ чакаланă уй-хирсенче халĕ тракторсемпе комбайнсем тата ытти нумай тĕрлĕ машинăсем ĕçлеççĕ. Чăваш хресченне çав машинăсене пĕтĕмпех Совет влаçĕ пачĕ. Кучухнехи çĕнĕ агротехникăна вĕренсе аса илнĕ колхозниксемпе колхозницăсем çĕрĕн тухăçлăхне çулран-çул ӳстерсе пыраççĕ. Колхоз фермисенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх çулран-çул йышлăланса, лайăхланса пырать.

Патша саманинче хура пӳртре пурăннă чăваш ĕççынни, Совет влаçĕпе колхоз стройĕ пулăшнипе, çĕнĕ, çутă пӳрте куçрĕ. Ĕлĕк хăйчикки мăкăрланнă пӳртсенче халĕ чылай çĕрте Ильич лампочки çунать. Ĕмĕр-ĕмĕр халăх куççулĕ пек юхса выртнă Çавалпа Ункă тата ытти тĕрлĕ шывсем çинче колхозсен гидростанцийĕсем ӳссе ларчĕç. Пур çĕрте те —колхоз пӳртĕнчен пуçласа чăваш çĕршывĕн тĕп хули—Шупашкар патне çитиччен—çĕнĕ, социализмлă культура ӳсе, чечекленсе пырать. Ĕлĕкхи саманара аслă культура тĕлне мар, хутпа кĕнеке тĕлне те пĕлмен ĕççыннисен анлă массисем, цивилизаци çулĕ çине тухса, малтан малалла кайса пыраççĕ. Чăваш халăхĕн хăйĕн ученăйĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем, врачĕсемпе учителĕсем, писателĕсемпе художникĕсем, композиторĕсемпе артисчĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Чăваш совет интеллигенцийĕ, пĕтĕм халăх массисем аслă вырăс халăхĕн тĕнчери чи çӳллĕ культури тӳпинелле утаççĕ.

Çак тивлетсене пире пурне те Октябрьти Социализмлă Аслă Революци, тăван Совет влаçĕ пачĕ, Большевиксен аслă партийĕ, юратнă тăван аттемĕр Сталин юлташ пире тĕрĕс çул кăтартса пыраççĕ, аслă тăванăмăр—вырăс халăхĕ пире пурнăç çулĕпе малтан малалла кайма пулăшса тăрать. Паян —Аслă уяв кунĕнче эпир çав пулăшушăн большевиксен партине, Сталин юлташа, вырăс халăхне пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватпăр.

Тăватă çул хушши пынă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те пирĕн чăваш халăхĕ, мĕнпур тăванла халăхсем пекех, фронтра та, тылра та паттăррăн кĕрешрĕ, ĕçлерĕ. Эпир хамăр çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе çулран-çул чыслăн пурнăçа кĕртсе пытăмăр. Халăх хуçалăхĕн вăй-хăватне эпир вăрçă вăхăтĕнче чакармарăмăр кăна мар, малалла ӳстерсе, хăватлантартăмăр.

Халĕ мирлĕ пурнăç пуçланчĕ. Пирĕн государство çĕнĕ пилĕкçуллăх планне палăртать. Çав план тăрăх пирĕн вăрçăпа сиен курса юлнă хуçалăха юсаса ура çине тăратмалла, пĕтĕм халăх хуçалăхне вăрçăччен хинчен нумай хут ытларах ӳстерсе хăватлантармалла. Çапла совет халăхĕ умĕнче çĕнĕ, аслă задачăсем тăраççĕ. Тăван çĕршывăн çарпа экономика хăватне татах та ытларах ӳстерессишĕн пирĕн улăпла вăй хурса ĕçлемелле пулать. Халăх умĕнче анлă çул уçăлса выртать, тавракурăмсем сарăлаççĕ.

Пирĕн хамăрăн предприятисене мирлĕ ĕçе куçармалла çеç мар, вĕсене нумай ытларах аслăлатмалла, хăватлантармалла. Социализмлă çĕрĕçĕн техникине малалла вăйлатмалла, çĕрĕн тухăçлăхне ӳстермелле. Социализмлă культурăна çĕнĕ вăй-хăват парса аталантармалла.

Ялта та, хулара та пирĕн ĕç алли йышлăланать. Демобилизаци законĕ тăрăх Хĕрлĕ Çартан вăй-питти çынсем нумай таврăнчĕç. Вĕсем пирĕн ĕçе фронтовиксен хастарлăхне кӳрĕç, мĕнпур ĕçченсемшĕн пример пулса тăрĕç. Партипе правительство вăрçăран таврăннă çынсемшĕн, çапăçу хирĕнче сывлăхĕсене çухатнă çынсемшĕн, хăйсен пурнăçĕсене Тăван çĕршывшăн панă çынсен çемьисемшĕн, предприятире, учреждениере çав тимлĕхе татах та ытларах ӳстермелле. Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн паттăррăн çапăçнă çынсемшĕн чăн-чăн тăванла тăрăшмалла.

Партин Центральный Комитечĕ хăй чĕнсе каланисенче халăха хамăр аслă çĕнтерĕвĕн çăлкуçĕсене, пирĕн государствăн вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсене татах та тепĕр хут кăтартса пачĕ. Çав çăлкуçĕсем вĕсем—пирĕн аслă Совет Союзĕ, Совет çĕршывĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕ, Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ пулса тăраççĕ.

Тăван çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче халăх хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене государство деятелĕсен полномочийĕсене парĕ. Халăх хăйĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, Тăван çĕршыва, большевиксен партине, аслă Сталина пĕтĕм чун-чĕререн юратнине çĕнĕрен çĕнĕ вăй-хăват хушса парĕ. Сталинла Конституци хĕвелĕ совет халăхне çĕнĕрен çĕнĕ вăй-хăват хушса парĕ.

Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн халăх çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тунă. Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе вăл социализм строительствинче татах та чаплăрах çĕнтерӳсем тăвĕ. Пирĕн халăх Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратса пурăнать, ĕçлет, кĕрешет.

Октябрь уявне тухса, эпир пурте пĕр шухăш-кăмăллăн çапла калатпăр:

— Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн юратнă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пире аслă çĕнтерӳсем патне ертсе пыракан аслă Сталин!

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ 28 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ЯТПА ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ МИТИНГПА ДЕМОНСТРАЦИ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН

1945 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче 11 сехетре Шупашкар хулин Хĕрлĕ площадĕнче ĕççыннисен митингĕпе демонстрацийĕ пулать.

Колоннăсене вырнаçтарса тăратас тата куçарса çӳрес тĕлĕшпе çакăн пек йĕрке йышăннă:

1. Митингпа демонстраци вăхăтĕнче пĕччен çӳрекен çынсене 10 сехетре Хĕрлĕ площаде кĕртме чарăнаççĕ.

2. Пур организацисем те Хĕрлĕ площаде колоннăсене ертсе пыракансемпе пĕрле пырса кĕреççĕ.

3. Колоннăсене вырнаçтарса тăратассишĕн тата куçарса çӳрессишĕн хулари Çар Комиссарĕ Елистратов подполковник ответлă.

4. Митингпа демонстраци вăхăтĕнче Хĕрлĕ площадьри йĕркелĕхшĕн Милици управленийĕн службăпа боевой хатĕрленӳ отделĕн начальникĕ милици майорĕ Полихов юлташ тата Хулари милици отделенийĕн начальникĕ милици капитанĕ Зотин юлташ ответ тытаççĕ.

Хула Совет исполкомĕ.
ВКП(б) хула комитечĕ.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-чи Суйлав Комиссийĕн составне кандидатсем тăратни

Шупашкар хулинчи парторганизаци Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне С. М. Ислюков юлташа кандидата тăратнă

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне кандидат тăратасси çинчен сӳтсе-яврĕ.

ВКП(б) горкомĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне хулари парти организацийĕнчен ВКП(б) горкомĕн секретарьне Семен Матвеевич Ислюков юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОМСОМОЛ ОРГАНИЗАЦИЙĔ РЕСПУБЛИКĂРИ СУЙЛАВ КОМИССИЙĔН СОСТАВНЕ Г. И. ПЕТРУХИН ЮЛТАША КАНДИДАТА ТĂРАТНĂ

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-яврĕ.

ВЛКСМ Обкомĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Чăваш республикинчи комсомол организацийĕнчен ВЛКСМ Обкомĕн секретарьне Георгий Ильич Петрухин юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Пуçламĕш тата вăтам шкул работникĕсен профессиллĕ союзĕн Чăваш Обкомĕ Л. Г. Денисова юлташа кандидата тăратнă

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-явас шутпа пуçламĕш тата вăтам шкул работникĕсен профессиллĕ союзĕн Чăваш обком президиумĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура ку ыйтупа РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ учительници, Шупашкар хулинчи сутĕç пайĕн инспекторĕ А. В. Черпакова юлташ сăмах тухса каланă.

— Паян эпир çакăнта, — тенĕ вăл, — Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне хамăр кандидата тăратас ыйтăва сӳтсе-явма пухăнтăмăр. Хам енчен эпĕ Людмила Григорьевна Денисова юлташа, Чăваш республикин тава тивĕçлĕ учительницине, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланăскерпе, кандидата тăратма сĕнетĕп. Л. Г. Денисова юлташа эпир пурсăмăрта лайăх пĕлсе тăратпăр. Вăл педагогика ĕçĕн мастерĕ тата лайăх общественница. Ăна республикăри учительсем те лайăх пĕлсе тăраççĕ. Хальхи вăхăтра вăл хулари сутĕç пайĕн инспекторĕ пулса ĕçлет, хăйне шанса панă пархатарлă ĕçе кирлĕ пек туса пырать.

Черпакова юлташ хыççăн ларура хулари сутĕç пайĕн заведующийĕ Л. Н. Богатырева, Чăваш республикин Сутĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Авдеев, Обком президиумĕн членĕ Шигаева юлташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте Денисова юлташăн ĕçне пысăка хурса хакларĕç.

Пуçламĕш тата вăтам шкул работникĕсен профессиллĕ союзĕн Чăваш Обкомĕ, пĕр саслă пулса, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне Людмила Григорьевна Денисова юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Чăваш республикинчи Осоавиахимăн Центральный Совет Оргбюровĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Н. Т. Тютиков юлташа кандидата тăратать

Чăваш республикинчи Осоавиахимăн Центральный Совет Оргбюровĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-яврĕ.

Президиум председателĕ И. А. Смирнов юлташ Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Чăваш республикинчи Военкоматăн политотдел начальникне Николай Трифонович Тютиков юлташа кандидата тăратма сĕнет.

Майор Шевлягин тата Левшин юлташсем, Смирнов сĕнĕвне хапăл туса, Тютиков юлташ кандидатури пур енчен те тивĕçлĕ пулни çинчен, вăл пултаруллă та хастарлă работник пулни çинчен каласа пачĕç. Ларура пулнă ытти юлташсем те Н. Т. Тютиков юлташăн кандидатурине хапăл туса йышăнчĕç.

Чăваш республикинчи Осоавиахимăн Центральный Совет Оргбюровĕ, пĕр саслă пулса, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссийĕн составне Николай Трифонович Тютиков юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Совет писателĕсен Союзĕ А. А. Эсхель юлташа кандидата тăратать

Чăваш республикинчи писательсен пухăвĕ Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссине кандидатсем тăратас ыйтăва пăхса тухрĕ.

Председатель пулса пухăва ертсе пыракан орденоносец С. В. Эльгер искусствăн тава тивĕçлĕ деятельне Кăлкан драматурга сăмах парать. Вăл Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комисси составне А. А. Эсхель поэт-орденоносеца кандидата тăратма сĕнет.

— Аркадий Александрович Эсхель,— тет вăл,—юлашки çулсем хушшинче, вăрçă çулĕсенче пушшех те, халăх кăмăлне каякан лайăх произведенисем çырса пачĕ. Унăн «Ăмăрткайăк» поэмине, çĕнĕ сăввисемпе калавĕсене, пьесисене чăваш халăхĕ лайăх пĕлсе тăрать.

Кăлкан хыççăн И. Тукташ, Я. Ухсай, Ф. Уяр, С. Шавлы, И. Малгай поэтсемпе писательсем сăмах тухса калаççĕ, вĕсем пурте Эсхель ĕçне пысăка хурса хакласа, писательсене унăн кандидатуришĕн сасăлама чĕнеççĕ.

Писательсен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, Аркадий Александрович Эсхель юлташа Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне кандидата тăратма йышăнать.

Машинист-орденоносец Л. Г. Николаев—Канашри железнодорожниксен кандидачĕ

Канаш станцийĕнчи депо коллективĕн пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ.

Ямпольский юлташ сăмах илет.

Вăл СССР Верховный Советне суйлас ĕçе хатĕрленес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен калать. Пĕтĕм çĕршыв, тет вăл, çав аслă куна ирттерме хатĕрленет. Совет Союзĕнчи патриотсем суйлав кунĕнче Тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсемшĕн сасă парĕç. Канаш узелĕнчи железнодорожниксене Ямпольский юлташ суйлав ячĕпе производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет. Депо коллективĕ умне, тет вăл, Суйлав Комисси составне кандидат тăратас задача тухса тăрать.

Ун хыççăн Александровский юлташ сăмах илет. Республикăри Суйлав Комисси составне вăл машинист-орденоносеца Леонид Григорьевич Николаев юлташа, Канаш станцийĕнчи депо коллективĕнчи стахановла ĕçе пуçарса яракана, кандидата тăратма сĕнет.

Пухури çынсем çак сĕнĕве хĕрӳллĕн ырласа йышăнаççĕ.

Крестников машинист, Жигунов мастер, депо дежурнăйĕ Каменский Николаев юлташ кандидатурине хапăл туса йышăнни çинчен каласа параççĕ. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Николаев юлташ вăхăта шеллемесĕр тăрăшса ĕçлени, çар эшелонĕсене хăвăрт çӳретни, хăйне панă заданисене ытлашшипех пурнăçа кĕртсе пырса топливо перекетлени çинчен пĕлтереççĕ. Пархатарлă ĕçленĕшĕн ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, «Хисеплĕ железнодорожник» значокпа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Пухура пулнисем, пĕр саслă пулса, паллă машинист-орденоносеца Леонид Григорьевич Николаев юлташа Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комисси составне кандидата тăратма йышăнаççĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Василий Васильевич Зайцев юлташа кандидата тăратаççĕ

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссине кандидата тăратас ыйтупа колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ.

Ку ыйтупа 60 çулхи колхозник Ф. Скрипкин юлташ сăмах илет.

— Сталинла Конституци панă тивлетпе усă курса,—тет вăл,—эпир Республикăри Суйлав Комиссин составне хамăр кандидата тăратма пултаратпăр. В. В. Зайцев юлташ ертсе пыракан пирĕн колхоз районри малта пыракан колхозсен шутĕнче тăрать. Пирĕн колхоз государство умĕнчи парăмсене пурне те татнă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те пирĕн колхоз лайăх ĕçлет.

Республикăри Суйлав Комиссин составне эпĕ Василий Васильевич Зайцев юлташа кандидата тăратма сĕнетĕп. Колхоза ертсе пырас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн правительство ăна Ленин орденĕпе наградăланине эпир пурте пĕлсе тăратпăр. Пирĕн колхоз шанса тăнине Зайцев юлташ тивĕçлĕ пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ,—вĕçлет хăйĕн сăмахне Скрипкин юлташ.

Колхозри ферма заведующийĕ А. Плотников тата звеновод А. Емельянова юлташсем Скрипкин юлташ сĕнĕвне хăйсем хĕрӳллĕн хапăл туса йышăнни çинчен каласа параççĕ. Вĕсем Зайцев юлташ пултаруллă руководитель пулни çинчен, вăл Ленин—Сталин партийĕн ĕçне вĕçне çитиех парăнса тăни çинчен каласа параççĕ.

Колхозниксен пухăвĕ, пĕр саслă пулса, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Республикăри Суйлав Комиссин составне Василий Васильевич Зайцев юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ.

Комсомол райкомĕсен секретарĕсен канашлăвĕ

Ноябрĕн 2—3-мĕшĕсенче Шупашкарта ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ВЛКСМ горкомĕсемпе райкомĕсем умĕнче хальхи тапхăрта тăракан практикăллă хăшпĕр ĕçсем çинчен ВЛКСМ Центральный Комитечĕн представителĕн Изюмов юлташăн докладне итлерĕ. СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленес тата ăна ирттерес ĕçре комсомол организацисем хутшăнса ĕçлесси çинчен ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Петрухин юлташ доклад туса пачĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа Улатăр хула комитечĕн секретарĕ Солдатов, Вăрмар райкомĕн секретарĕ Иванов, Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ Тихонов, Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Васильев, Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Агеева юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем вырăнсенче суйлава мĕнле хатĕрленни тата комсомол организацийĕсем ку ĕçе мĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен каласа пачĕç.

Суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе Вăрмар районĕнче лайăх ĕçленипе палăртмалла. Кунта 220 комсомолец колхозсенче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. «Дружба» колхозра агитатор пулса Петрова комсомолка ĕçлет. Вăл колхоз çамрăкĕсене суйлав Положенийĕпе паллаштарас майпа колхоз çамрăкĕсен вечерне ирттернĕ. Вечер умĕн ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Павлова юлташ суйлав çинчен доклад туса панă. «Свобода» колхозра комсомолецсем суйлав Положенине бригадăсенче ăнлантарса панă. Кунсăр пуçне ăна вĕренме колхозра кружок организациленĕ. Вулав çуртĕнче суйлав çинчен калакан материалсемпе статьясен витринине тунă, ятарласа стена хаçачĕ кăларнă.

Улатăр, Çĕрпӳ тата ытти районсенче те СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленес ĕçе комсомолецсем активлăн хутшăнаççĕ.

Канашлу пĕтес умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Т. А. Ахазов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл комсомолецсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, государствăна тырă парас тĕлĕшпе епле ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ, ĕçри çитменлĕхсене критиклерĕ тата малашнехи ĕçсем çинчен каларĕ.

Канашлу хыççăн комсомол райкомĕсен секретарĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен Чебухов юлташ докладне итлерĕç

—⊙—

„Трактор" колхозăн çитĕнӳĕсем

Чурачăк районĕнчи «Трактор» колхоз членĕсем, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçлама пулнăччĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем уявччен государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç. Колхоз паянхи кун тĕлне государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татрĕ тата Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырăпа çĕрулми леççе пачĕ. 1946 çулшăн аванс шучĕпе 10 центнер аш-какай парса хучĕ. Укçа-тенкĕ парăмĕсене те пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Колхозниксем те хăйсен парăмĕсене тӳлеççĕ. Всеволодов, Тимофеева тата ытти колхозниксем хăйсен пур тĕрлĕ парăмĕсене те тӳлесе татрĕç.

Кăçал тырă тухăçлăхĕ лайăх. Сĕлĕ кашни гектартан вăтам шутпа 17 центнер тухать. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксен звени татах та тухăçларах тырпул туса илнĕ. Звено 7 гектар çинче ĕçленĕ, ăна комсомолец Григорьев юлташ ертсе пынă. Çак звено кашни гектартан: сĕлĕ 24 центнер, урпа 26 центнер пухса илнĕ. Вăрлăх участокĕ çинче çитĕнтернĕ тырра пĕтĕмпех уйрăмăн выртнă, уяр вăхăтра çапса, лайăх тасатнă, амбара хупă тата акт çырса кладовщик аллине панă.

Колхозниксем халĕ «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренеççĕ. Пурĕ 6 кружок тунă. Кружоксенче 2—3 заняти пулса иртнĕ. Уйрăмăнах Тимофеев, Павлов тата Михайлова агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем занятисене ирттерме лайăх хатĕрленеççĕ, кружока çӳрекенсем те вĕсене тимлĕн итлеççĕ. Кружока çӳреймен суйлавçăсене килĕрен çӳресе «Положенине» паллаштараççĕ. Агитколлектив руководителĕ Алексеев юлташ агитаторсен канашлăвĕсене час-часах ирттерет. Юлашки вăхăтра агитаторсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул çитнĕ тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисене колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пачĕç.

«Трактор» колхоз членĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине ĕçри паха çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ.

П. ВАСИЛЬЕВ.

Я Л Т И У Я В

Шуçăм суттăн шуса килчĕ
Çăлтăрсем пытаннă май.
Лăпкă, капăр кĕр тивлечĕ
Илĕртет кăмăлăма.
Ял вăранчĕ, ял сĕкленчĕ
Ыйхăран тăрса ирех.
Çынсем хăвăрт шукĕлленчĕç
Уяв кунĕ çитнĕран.
Темиçе урам пĕр ярăм
Шăп выртатчĕ халь кăна,—
Анă юрă юхса карĕ
Пирĕн пĕтĕм таврана.
Ситрĕ ирĕклĕх уявĕ.
Тăшман юлчĕ тĕп пулса.
Çĕнтерӳ кӳрен ялавĕ
Вăлнĕшет пире савса.
Киллĕнет колхозăн йышĕ,
Утать уçă ĕмĕтпе,
Туйăнать вăл халĕ маншăн
Тин хумханнă тинĕс пек.
Ку хавасла халăх хумĕ,
Савăнать Октябрьпе.
Паян аслă уяв кунĕ
Тулчĕ чыслăх юррипе.
Пурнăç çулĕ евĕр такăр
Тăсăлан урамĕнче
Юрласа эпир пыратпăр
Ялавсенĕн айĕнче.
Вăрçăран халь килнĕ каччă
Купăсне шăрантарать,
Хĕрĕсем ташша çапаççĕ
Утса пынă вăхăтрах.
Лăпкă çил—Октябрь çилĕ
Ваккаса вĕрсе иртет.
Саламсем пухса, илемлĕ
Мускава пырса кĕрет.
— Тав сана, аттемĕр Сталин,
Тав сана, мухтав сана!
Эс телейлĕ пурнăç патăн,
Эсĕ—пирĕн самана!
Çĕнтерӳ хĕвелĕ чаплăн
Йăлтăрать çĕршывăмра.—
Эс ăна, аттемĕр Сталин,
Çутатса йăлкăштаран!

Иван МАЛГАЙ.

Çĕнтерӳпе мир уявĕ

Хĕрĕх пĕррремĕш çулхи ноябрĕн улттăмĕшĕнче каçхине Ленинград Сталин сăмахне итлерĕ. Аслă çулпуçăн сăмахĕ зениткăсем пенин, бомбăсем уланин, бомба катăкĕсем шăхăрнин, сиренăсем кăшкăрнин сассине хупласа янăрарĕ. Хуран курăнса выртакан тăпрана юр хĕвсе каять; ишĕлчĕксен мăрьисем кĕрхи сивĕ çил çинче салхуллăн çĕкленсе тăраççĕ. Пирĕн çĕршыва тĕттĕмлĕх хупăрласа илчĕ, çак тĕттĕмлĕхре халăхăн чĕри хаклă шанчăкпа, вĕçĕмсĕр вăйлă çапăçусем пулассине пĕлсе тапса тăчĕ.

Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи çак каçа Сталинград çуннин ĕмĕр манми пушарĕ çутатрĕ. Кунта Атăлшăн татăклă çапăçусем пулса иртрĕç, кунта Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем, пĕринчен тепри паттăртарах пулас тесе ăмăртса, вилĕмрен хăрамасăр тăчĕç, ун чухне тăшман урса кайнăччĕ, вĕçĕмсĕр атакăсем тăватчĕ, хаяррăн хирĕç тăратчĕ. Вăл юнпа, хăранипе, часах пĕтессине сиснипе ухмаха ерсе кайнăччĕ.

Хĕрĕх виççĕмĕш çул çак каçхине Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă полкĕсем ирĕке кăларнă Киева пырса кĕчĕç. Йĕри-тавра ишĕлчĕксем курăнаççĕ, тĕтĕм, çав ишĕлчĕксене пушар çутисем çутатаççĕ, анчах та Киев сывлать, вăл хавасланнипе макăрать, хăйне нимĕç чуралăхĕнчен ирĕке кăларнă хăйĕн ывăлĕсене тав тăвать.

Юлашкинчен вара, иртнĕ çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче, эпир хамăрăн юратнă çулпуç совет çĕрĕ çинчен нимĕçсене хăваласа кăларнă тенине илтрĕмĕр.

Халĕ пурте хыçа тăрса юлчĕ: çĕрнекунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлени, çапăçусем, походсем, фронтри çулйĕрсем, çав тери пысăк йывăрлăхсем, çапăçу хирĕнче паттăрла ĕçсем туни, çынсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр вилĕмсĕр пулса юлни, çаксем пурте иртсе кайрĕç.

Инçетре Çурçĕрте самолет вĕçет, анчах та вăл бомба йăтса пымасть. Вăл мирлĕ пурнăçăн разведчикĕ. Вăл, Ной хăйĕн ковчегĕнчен кăларса янă кăвакарчăн пек, малалла чечекленессин паллăлăхне илсе çӳрет. Паян Совет çынни ăçта та пулин Бухарестра е Лейпцигра Мускав калаçнине итлеме площаде тухать те, вăл хăй мĕн-мĕн курни-илтнишĕн хăй тĕлĕнет. Вăл çак çулсем хушшинче мĕнле-мĕнле çулсем тăрăх утса тухмарĕ, мĕнле-мĕнле ĕç тумарĕ! Пĕр çамрăк поэт ман пата çыру ячĕ. Эдельвейс ятлă чечеке, тимĕртен тунăскере, малтан Поляр унки леш енче, Лице ятлă сивĕ юханшывăн улăхĕнче тата Рыбачий çурутравăн чул-сăрчĕсем çинче нимĕç егерĕсен каскисемпе çанисем çинче куртăм, тесе çырать вăл. Унтан тепĕртак вăхăт иртсен, вăл çав эдельвейс чечеке инçетри Австрин тăвĕсем çинче, çав Альп чечекĕн тăван çĕршывĕнче курнă. Ун çинчен вăл мана, çын пырса кĕме май çук та тискер Хинган урлă каçнă хыççăн, Лăпкă океанăн çӳллĕ çыранĕсенчен çырса ячĕ. Çак çулсенче вырăс çамрăкĕ çавăн пек хăвăрт куçса çӳренĕ! Пĕрисем Берлина Тĕрек çинчен, теприсем—Владивостокран пырса кĕнĕ.

Çаксем ĕнтĕ вăрçă ĕçне Волхов сывăхĕнчи окопсенче е Брянск таврашĕнчи вăрмансенче вĕренме пуçланă чĕмсĕр çынсем мар. Вĕсем Европăри вĕренӳ курспе пĕтернĕ çынсем. Вĕсем Дунайпа Тиссăн, Одерпа Эльбăн, пĕчĕк Шпреен сенкер шывĕсене курнă. Çав юханшывсен çыранĕнче тĕнчене шутсăр пысăк пилĕк тунă усаллăх пуçланса çирĕпленнĕ. Балканпа Альп тăвĕсем, Татрпа Карпат тăвĕсем совет воинĕн, вырăс воинĕн çирĕп пусăмĕпе янăрарĕç.

Ишĕлсе пĕтнĕ Берлин, Гитлерăн йăви, совет воинĕн çирĕп ирĕклĕхне кăтартса тăрать. Пăшал сассисем те илтĕнмеççĕ, бомбăсем те ӳкмеççĕ. Аллинчен автомата пăрахмасăр тата хăй шухăшласа кăларнă, анчах та пурнăçа кĕртме ĕлкĕреймен тамăк машинисен чертежĕсене аларан ямасăр, фашизм мĕн вĕçне çитиех çапăçма шутларĕ. Пирĕн воинăн алли ăна ярса тытрĕ те чĕркуçленсе лармалла турĕ.

Пирĕн мĕнпур çĕршывра мир.

Пуртă сасси илтĕнет, вăрманăн тĕрхи шăплăхĕнче вăл пĕр пек те янăравлăн инçене кайса çухалать. Кунта совет çынни хăйне валли çĕнĕ çурт тăвать, вăл тăрăшсах йывăç касать, вара тарне шăлса илнĕ чухне кĕрхи вăрманăн илемне йĕри-тавра пăхса илет те, пурте унăн кăмăлне каять: вăл эрех шăрши кăларса выртакан тăкăннă çулçă кашăртатăвне те, туратсем витĕр унăн ĕçне пăхса сăпакан хăй тĕлĕнчи янкар тӳпене те, хурарах-кăвакрах шывне шăнкăртаттарса юхтаракан пĕчĕк юханшывăн шавне те, хырсен яланах çĕнĕ те илемлĕ вуллисене те кăмăлласа пăхать.

Кĕтӳçĕн çинçе те янăравлă сасси илтĕнет. Вăл шутсăр йышлă кĕтӳ хушшинче тăрать, ун умĕнче анлă çеçенхир сарăлса выртать, ун сывăхĕнче—çак анлăхăн хуçи сывăхĕнче—çамламас хуралçăсем кĕпĕрленеççĕ.

Горец фронтран таврăнать те, ту тăррине хăпарса çитсен, Кавказ леш енчи кĕрхи ешел симĕс ăшĕнче ларакан хăйĕн ялне курать. Кунта хăл тĕлĕк пек туйăнать, çутçанталăк та, тĕлĕкри пек ăшшăн та чĕмсĕррĕн кулянçи тунă пек туйăнать. Вара тăван кĕтессе тăватă çул хушши курман çын чарăнса тăрать, çаксем пурте ăна çав тери хаклă пек, пулма пултарайман пек туйăнаççĕ. Ăка мĕне вăл çав тери юратса хӳтĕлерĕ. Вăл çăлса хăварнă Тăван çĕршывăн телейне туйса илес тесе çак ту тăррине çитме ĕмĕтленнĕччĕ, вăл халь унта çитсе тăчĕ.

Эсир кирек хăш еннелле пăхсан та, кирек хăш енчен итлесен те, пур çĕрте те мирлĕ ĕçĕн хаваслă шавне куоса илтетĕр. Сирĕн куç умĕнчен металлурги гиганчĕсем, асла ирĕклĕхпе ĕç тунăскерсем, иртсе пыраççĕ. Вĕсем, линкорсем пекех, çăра тĕтĕм кăларса тăраççĕ. вĕсен çав тери пысăк залĕсем, мастерскойĕсем, кранĕсем, эстакачĕсем куç умĕнчен иртсе пыраççĕ. Донбаспа Магнитогорскри домнăсем, Бакури нефть вышкисем, Мускавпа Ленинград, Челябинскпа Харьков, Свердловскпа Караганда завочĕсем куç умне тухса тăраççĕ.

Ленин çапла каланă: «Мĕнпур рабочи класăн тата мĕнпур хресченсен лайăх çыннисем эксплуататорсене хирĕç пынă çак вăрçăра тĕлĕнмелле паттăрла ĕçсем тунине пула, ĕмĕрне курман йывăрлăхсене чăтнине пула, хăйсене хăйсем шеллеменнине пула, шкурниксемпе хăравçăсене нимĕн шеллемесĕр хăваласа кăларнине пула эпир çĕнтертĕмĕр» (Ленин. Сочиненисем, XXX-мĕш том, 402 стр.).

Аслă Сталин «простой, мухтанма юратман çынсемшĕн, пирĕн государствăн аслă механизмне наукăн, хуçалăхăн тата çар ĕçĕн пур отраслĕсенче те яланах активлăхра тытса тăракан «винтиксемшĕн» черкке çĕклерĕ.

Пулас ăрусем валли çав мухтанма юратман геройсен ĕçĕсене сăнласа парас тесен, художниксен, скульпторсен, историксен, писательсен, поэтсен, драматургсен, мĕн чухлĕ вăй хурса творчествăллă-хăвхаланулла ĕç тума тивет! Çак аслă ĕçсен мухтанма юратман çыннисем çав тери тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине, çĕнĕ япаласем шухăшласа кăларса тунине пула, пирĕн техникăн çав тери вăйлă юхăмĕ калама çук анлăн сарăлса Европăн варрине пырса çитрĕ, унăн умĕнче вара, тĕлĕнмелле вăй-хăват умĕнчи пекех, фашистла Германин юнлă техницизмĕ тĕршĕнсе анчĕ. Гитлерла Германие унăн çĕр айĕнчи вăрттăн завочĕсем те пулăшаймарĕç.

Вырăссен «Дубинушки» хăй тĕллĕн ĕçме-çиме хатĕрлекен хурçă скатерть тата хурçă кавир-самолет пулса тăчĕ. Вырăс мастерĕ калама çук ӳссе кайрĕ, ăна пĕтĕм тĕнчипе хисеплеме тытăнчĕç. Чăн та ĕнтĕ, вăл ирĕклĕхпе миршĕн пынă çак çапăçура чи малти вырăна тухса тăчĕ. Вăл—герой тата ветеран.

Вăл паян канать, хăйĕн алли тунă ĕçсем çине хăйне май юратса пăхса илет, вара унăн ывăннă сăн-пичĕ кăмăллăн кулса ярать.

Вăл, хăйĕн çулне пăхмасăрах, хăй ĕçе вĕрентсе воспитани панă çамрăксемпе пĕрле хавасланма тытăнать. Çав çамрăксем ăна намăс кăтартмарĕç, унăн—учителĕн—ятне ямарĕç. Çамрăксем вара тивĕçлипех хавасланаççĕ, мĕншĕн хавасланас мар-ха вĕсен çакăн пек хаваслă кун! Пирĕн çамрăксем хăйсене ăçта янă, çавăнта кайса ĕç турĕç. Тӳррипе каласан, вĕсен çав тери йывăр ĕçсем тума тиврĕ. Кучухнехи техника пире çак кас хамăрăн çĕршывăн пур кĕтессисенче те пулса курма май паманнишĕн шел. Вăл —пирĕн çĕршыв çав тери аслă, хăйĕн анлăшĕ енĕпе вăл çав тери пуян. Самантрах пиншер çухрăм кайма пултарнă пулсан, эпир Çĕпĕрти сунарçăн кăвачĕ умне пырса ларнă пулăттăмăр, Полярти факторие пырса пăхнă пулăттăмăр, Таджикистанри, Кавказри тусем çинчи пĕлĕт ăшĕнчи пĕр-пĕр аула, Уралти авалхи заводсене пырса пăхнă пулăттăмăр, Ленинградри Быборг енĕнче, Мускаври Хĕрлĕ Пресняра утса çӳренĕ пулăттăмăр, унтан вара хамăрăн юмахри пек кăнтăра, Крыма, Дунай çине, Измаила кайнă пулăттăмăр, çула май вара Киева кĕрсе тухмасăр иртмен пулăттăмăр...

Пур çĕрте те эпир Октябрь уявне уявлакан совет çыннисене курнă пулăттăмăр. Çак кас вĕсем аслă вăхăт çинчен, Совет çĕршывĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсен паттар ĕçĕсем çинчен аса-илсе каласа панă пулĕччĕç. Чи малтанхи сăмахрах пĕтĕм чĕререн вĕсем прогреспа ирĕклĕхĕн хаяр та урса кайнă тăшманне парăнтарнăшăн совет халăхĕпе ирĕклĕхе юратакан тĕнчери мĕнпур халăхсем тав тума тивĕçлĕ çынна асăннă пулĕччĕç.

Çак чĕререн каланă чи ăшă та кăмăллă сăмаха Кремлĕн ватăлса кăвакарнă башнисем патне, хăйĕн ялкăшса тăракан çăлтăрĕсемпе паян çав тери çамрăккăн курăнакан ăскер патне, тĕнчери чи аслă та юратакан çын патне, халăхсен çулпуçĕпе учителĕ патне, Генералиссимус Сталин патне янă пулĕччĕç.

Унăн çак кăткăс та ĕмĕр манăçа тухми вăхăтри ĕççенче пур енчен те паларнă сăнарĕ ĕмĕрсем хушши сыхланса пурăнĕ. Вăл Совет халăхне чĕнсе калани яланах халăхăн чăнлăхне пĕлтерсе янăраса тăрĕ, вăл çĕр çинче пуринчен те вăйлă сăмах пулса тăрĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вăл каланă сăмахсене, докладсене вуласа тухсан, кашни çын унăн ăслăлăхĕнчен тĕлĕнет. Çав сăмахсемпе докладсенче вăл пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем кĕрешĕве çĕкленнине, унăн ирĕклĕхне çав тери усăмлăн кăтартса парать. Çав сăмахсемпе докладсем унăн вăрçă ĕçĕнчи генилĕхне, çĕнтерӳ организациленĕскере, кăтартса параççĕ. Çав генилĕх умĕнче иртнĕ вăхăтри пур полководецсен çĕнтерĕвĕсем те шупкаланса тĕттĕмленеççĕ. Вăл 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площаде мĕнле тухнине, 1945 çулхи июнь уйăхĕнчи ăшă кун Çĕнтерӳ парадне çав площадех мĕнле тухнине халăх ĕмĕр-ĕмĕр хăйĕн чĕринче тытса усрĕ.

Унăн сăнарĕ чи сывăх çынăн сăнарĕ пек, чи илемлĕ те юратакан çын сăнарĕ пек тухса тăрать.

Вăл—чăнлăхпа тĕрĕслĕхĕн чи аслă вицçи. Вăл тĕнчен кун-çулĕшĕн ответ тытас ĕçе хăй çине илчĕ, вăл пирĕн Тăван çĕршыври халăхсене мĕнпур тĕрĕслевсем витĕр илсе тухрĕ, вара эпир Хĕвеланăçĕнче те, Хĕвелтухăçĕнче те пирĕн çĕнтерӳн аслă уявĕ пуçпулса тăнине куртăмăр. Çак вăхăтран пуçласа çав ĕмĕр манăçа тухми çулсемпе сыхăнса тăракан ĕçсем пурте унăн ячĕпе сыхăнса тăраççĕ, çав ĕçсем çинчен ăна аса илмесĕр шутлама та çук.

Вăрçăн тĕтĕм-сĕрĕмĕ витĕр вăл хăйĕн ăмăрткайăк пек куçĕпе пирĕн пуласлăхăн мухтавлă çулйĕрне курса тăчĕ. Ăна нимĕн те хăратаймарĕ, чи йывăр кунсенче, чи хаяр тĕрĕслев вăхăтĕнче ăна Совет халăхне, вырăс халăхне ĕненсе тăрас шанчăка нимĕн те çухаттарма пултараймарĕ.

Вăл—халăхăн хаваслăхĕпе юратăвĕ! Вăл—Тăван çĕршывпа ирĕклĕхе çăлса хăваракане—аслă Сталин!

Николай ТИХОНОВ.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен Лондонри конференцийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕн ларăвĕнче çамрăксен вăрçă хыççăнхи нушисем çинчен малалла сӳтсе-явнă.

Америка делегатки Эльза Грейвс çапла каланă: «Эпир пурне те ĕç тупмашкăн право пама ыйтатпăр. Эпир çамрăксем пурте ĕçлĕ пулччăр, профессисене вĕренме пултарччăр тесе кĕрешетпĕр. Эпир çапла шутлатпăр: çамрăк рабочисем вĕреннĕ вăхăтра та ĕç укçи илсе тăмалла. Пĕр пек ĕçшĕн пĕр пек ĕç укçи тӳлесе тăмалли принципа пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешетпĕр эпир. Эпир кам мĕнле раса çынни пулнине, мĕнле тĕн тытса тăнине тата ытти уйрăмлăхсене пăхса е политикăллă шухăш-кăмăлсене кура ĕç панине пĕтерме чĕнетпĕр».

Америка делегацийĕ тăратнă программăра çапла каланă: çамрăксен хăйсен организацийĕсене тума право пулмалла, çавăн пекех тата вĕренес тĕлĕшпе пур çĕршывсенчи çамрăксемшĕн те пĕртанлăх туса хумалла.

Великобританири студентсен нацилле союзĕн председателĕ Тони Джеймс колонисенчи çамрăксен нушисем çинчен ыттисенчен ытларах чарăнса тăнă. Вăл çапла каланă: «Англи делегацийĕ колонисенчи халăхсене вĕсен чи малтанхи демократиллĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерме пур майпа та пулăшма сăмах парать. Британири çамрăксен тивĕçлĕ ыйтăвĕсене колонисенчи çамрăксен ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртмесĕр татса пама май çук».

Ытти делегатсем те нумайăшĕ (Ямайкăри çамрăксен, Нигерири çамрăксен, Гамбири çамрăксен представителĕсем тата ыттисем те) колонисенчи тата урăх государствăсене пăхăнса тăракан çĕршывсенчи çамрăксен нушисем çинчен калана.

Колонисенчен килнĕ делегатсен пурин те пĕр ыйту пулнă: вĕренмешкĕн ытларах майсем тупса памалла, тенĕ вĕсем.

Австри делегацийĕн членĕ Франц Даниманн çапла каланă: Австрири çамрăксен организацийĕн задачи—унти çамрăксене демократи майлă вĕрентесси тата вĕсене Австрие демократиллĕ йĕркелес ĕçе явăçтарасси пулса тăрать,—тенĕ.

Ларура пулнă çамрăксем Югослави делегацийĕн членне католик священникне Станко Цанкара ăшшăн кĕтсе илнĕ. Цанкар çапла каланă: «Хăратса тăракан пĕртен пĕр хăрушлăх вăл—фашизм. Фашистсене усал ĕçсем тума тепĕр хут ирĕк парас çук эпир», тенĕ.

Монголи Халăх Республикин делегачĕ Гомбосурун каланă сăмаха ларура питĕ тимлĕн итленĕ.

Эстони делегачĕ Мери юлташ çапла каланă: «Эпир, çамрăк ăру, тăшмана çĕнтерес тесе нумай тăрăшрăмăр, тарпа юн та чылай тăкрăмăр, пирĕн вилнисем те сахал мар пулчĕç. Пулса иртнĕ çапăçусенче тĕнчери демократиллĕ çамрăксем кирек мĕнле мирлĕ пурнăç пултăр тесе мар, çамрăксен экономикăпа политикăллă прависене пурнăçа кĕртекен мир пултăр тесе кĕрешнĕ. Эстони çамрăкĕсем çак конференцие саламлаççĕ, вĕсем çак конференци пĕтĕм тĕнчери çамрăксене организацилесе пĕтĕçтерессине шанса тăраççĕ».

ГЕРМАНИН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ПУРЛĂХНЕ АЛЛА ИЛНИ

БЕРЛИН, октябрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Контроль Совечĕн вуннăмĕш ларăвĕнче Германин ют çĕршывсенчи пурлăхне алла илесси çинчен закон йышăннă. Законра çапла каланă: «Германин çар хăватне пĕтерсе лартса пĕтĕм тĕнчипе мир тата коллективлă хăрушсăрлăх тума пулăшас тесе, Контроль Совечĕ Германин ют çĕршывсенчи мĕнпур активĕсене контроллесе тăма тата Германирен çав активсене туртса илме йышăннă».

Германин ют çĕршывсенчи активĕсем тĕлĕшпе Потсдамри конференци йышăннă решенисем тăрăх тата çирĕплетнĕ политикăллă принципсемпе экономикăллă принципсем тăрăх ĕçлесе, Контроль Совечĕ Германин ют çĕршывсенчи пурлăхĕ тĕлĕшпе ĕçлекен комисси туса хунă. Çав комиссие Германие оккупациленĕ державăсен представителĕсем кĕреççĕ. Вăл комиссие правительствăсем хушшинчи орган пек тăваççĕ, унăн полномочийĕсемпе влаçĕ Контроль Совечĕнни пекех пулаççĕ, çав закона пурнăçа кĕртес ĕçре вăл Контроль Совечĕ вырăнне ĕçлет. Çав комиссин ĕçĕсемпе прависене закона кăтартса панă.

Германири кирек мĕнле нимĕçĕн те Германи тулашĕнчи пурлăхĕ тĕлĕшпе е Германири нимĕç контроллесе тăракан çавăн пек хуть те мĕнле пурлăх тĕлĕшпе те мĕнпур правăсем комисси аллине куçаççĕ.

Германин ют çĕршывсенчи пурлăхĕ çинчен кирлĕ материалсене пухса йĕркене кĕртесси оккупацин кашни зонинче çав зона командующийĕн ĕçĕ пулса тăрать.

ЯПОНИН ÇАР МИНИСТЕРСТВИПЕ ТИНĔС МИНИСТЕРСТВИНЕ ХУПНĂ

ТОКИО, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Япони правительствин октябрĕн 28-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче çар министерствипе тинĕс министерствине хупма йышăннине официаллă йĕркепе çирĕплетнĕ. Çав икĕ министерство вырăнне урăх министерствăсем тăваççĕ. Çак министерствăсен вара Япони çарĕпе флотне салатса ярас тĕлĕшпе ĕçлемелле пулать.

«ИРĔКЛĔХШĔН ÇАПĂÇСА ВИЛНĔ ÇЫНСЕН КУННЕ» ПАЛЛА ТУСА ИРТТЕРНĔ

ВАРШАВА, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри хуласемпе ялсенчи халăх ноябрĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшне «Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ çынсен кунĕ» туса хисепленĕ. Пур çĕрте те хурлăхлă чаплă ларусем туса ирттернĕ. Польша çарĕн чаçĕсем, çамрăксен организацийĕсем тата халăх демонстрацисем тунă.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах хуласемпе ялсенчи халăх, Польша халăхне фашистла захватчиксен пусмăрлăхĕнчен çăлса кăларассишĕн çапăçса вилнĕ Хĕрлĕ Çар воинĕсене хисеплесе, Хĕрлĕ Çарăн вилнĕ боецĕсемпе офицерĕсен вилĕ тăприсене чечексемпе тата тĕрлĕ курăксемпе илемлетнĕ.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Варшава хулинчи «Рома» кинотеатрĕнче çав вилнĕ çынсен ячĕпе хурлăхлă чаплă лару туса ирттернĕ.

НОРВЕГИ ПАРЛАМЕНТНЕ СУЙЛАНИН ТАТĂКЛĂ ИТОГĔСЕМ

ОСЛО, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Норвеги парламентне мĕнле партисенчен миçе депутат суйланни çинчен калакан татăклă итогсене пичетлесе кăларнă. Рабочисен партийĕнчен 76 депутат суйланнă, сылтăмрисен «хейре» ятлă партийĕнчен—25 депутат, либералсен «венстре» ятлă партийĕнчен—20 депутат, коммунистсен партийĕнчен—11, хресчен партийĕнчен—10, христиан-халăх партийĕнчен—8 депутат суйланнă.

НОРВЕГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ОСЛО, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла премьер-министр Герхардсен Норвеги правительстви вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ.

„Динамо" футболисчĕсем Лондона вĕçсе кайнă

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Англи футболисчĕсемпе вылямa Лондона Мускаври «Динамо» мастерĕсен команди вĕçсе кайнă. Ку команда футбол тĕлĕшпе 1945 çулта СССР чемпионĕ пулса тăнă. Ку таранччен вăл ют çĕршывсенчи футболистсенчен баскисемпе, французсемпе тата чехословаксемпе тĕл пулса вылянă, Англи футболисчĕсемпе пĕррремĕш хут тĕл пулать.

Чи малтан вăл Лондонри чи пысăк клубсенчен пĕрин, «Челси» ятлин, командипе вылять. Çав команда Англире мала тухассишĕн кĕрешекен командăсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл командăра вылякан футболистсем нумайăшĕ ытти государствăсен командисемпе те вылянă. Мускав динамовецĕсем юлашки вăхăтра Англи футболисчĕсемпе тĕл пулса вылямa питĕ хытă хатĕрленнĕ. Вĕсем кунсеренех чупнă, гимнастика тунă тата футбол теорине вĕреннĕ. Лондона вĕсем хăйсен яланхи составĕпе кайнă: Хомич, Радикорский, Семичасный, Станкевич, Блинков, Л. Соловьев, Трофимов, Карцев, Бесков, Малявкин, С. Соловьев. Запасра пулма Кочетовпа Медведев вратарьсем, спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ С. Ильин тата ыттисем те кайнă.

Командăпа пĕрле унăн тренерĕ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ М. Якушин кайнă. Делегацие СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт комитечĕн председатель заместителĕ К. А. Андриянов юлташ пуçпулса ертсе пырать.

Совет футболисчĕсем пырассине Лондонри çынсем питĕ интересленсе кĕтеççĕ. Мускава çитнĕ хыпарсем тăрăх, «Динамо» командипе «Челси» командин вăййине курма кĕмелли пур билетсене те сутса пĕтернĕ. Çав вăййа 86.000 çын вырнаçакан стадионра пулать. (ТАСС).

СОВЕТ ФУТБОЛИСЧĔСЕМ ЛОНДОНА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Мускаври футболистсен «Динамо» команди ноябрĕн 4-мĕшĕнче Лондон сывăхĕнчи Крейтон аэродромне вĕçсе çитнĕ. Совет футболисчĕсен командине Англи футболисчĕсен ассоциацийĕн секретарĕ Роуз хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

ГРЕЦИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУНИ ÇИНЧЕН

АФИНЫ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Грецири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 1-мĕшĕнче профессор Панайотис Канелопулос Грецин çĕнĕ правительствине туса хунă.

АФИНЫ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Канелопулос çĕнĕ правительство туса хуни çинчен «Вима» хаçат ноябрĕн 2-мĕшĕнче çапла çырнă: «Регентăн çĕнĕ ĕçĕ» Греци халăхне тарăхтарать. Событисем «çак çĕнĕ правительствăна часах сирпĕтсе ярĕç», тенĕ.

«Махи» хаçат çапла çырать: çĕнĕ правительствăна Папандреун «политикăллă вассалĕсем» кĕнĕ, партисемпе организацисем ăна пулăшас çук, тата çав правительствăра экономикăри йĕркесĕрлĕхе пĕтерсе лартма пултаракан çынсем çук, çавăнпа вăл нумай ĕçлесе тăма пултараймасть, тет. Хаçат малалла çапла калать: конституци тĕлĕшпе çирĕпленнĕ йĕласем тăрăх, регентăн çĕнĕ правительство тума Канелопулоса мар, пысăк партин пуçлăхне хушмалла пулнă; Канелопулосăн партийĕ суйлава пĕр хут çеç хутшăннă, тата вăл пĕр мандат та илеймен.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Голланди Индийĕнчи вăйĕсен командующийĕ Кристисон генерал восстани тăвакансене çапла асăрхаттарнă: пире хирĕç тăрса çапăçакан индонезиецсене пеме приказ паратăп, тенĕ. Вара союзниксен самолечĕсем Индонези çарĕсене хирĕç Магелангăра çапăçма тытăннă.

Сурабая çыранĕсенче акăлчансем укрепленисем тăваççĕ, казармăсем лартаççĕ, халĕ унта танксем илсе пынă. Акăлчансен Сурабайăри çĕнĕ командующийĕ Пью полковник телефон тăрăх çапла каланă: Сурабайăри лару-тăру питех те çивĕчленсе çитнĕ. Батавийăна «Москито» йышши самолетсен эскадрильи пынă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Австралири Сидней хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Сиднейри «Вĕçекен кимĕсен» базинче рабочисем, хăйсене Индонезири çынсена хирĕç ан вăрçтарччăр тесе, Голланди авиацийĕнче ĕçлеме пăрахнă.

Тĕрĕсленĕ материалсем тăрăх

„Старт" ăйăра вĕлернĕшĕн

Пирĕн редакцине Советски районри «Комбайн» колхозра выльăх-чĕрлĕх çине чунсăр пăхни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. «Комбайн» колхоз председателĕ М. Н. Абрамов лаша пăхас ĕçе кирлĕ пек организацилесе вырăнне, хытă хăваласа «Старт» ятлă ăратлă ăйăра вĕлернĕ. Советски районри прокурор Воронин юлташ тĕрĕсленĕ хыççăн материалта çырнисем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Колхоза ертсе пырас тĕлĕшпе начар ĕçленĕшĕн тата колхозăн ăратлă ăйăрне вĕлернĕшĕн Абрамова колхоз председателĕнчен кăларнă тата уголовнăй йĕркепе айăпласа суда панă.

Ялхуçалăх çулĕн хăшпĕр итогĕсем

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарнине кăçал эпир мирлĕ лару-тăрура уявласа ирттеретпĕр. Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсем пекех, пирĕн Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем аслă çĕнтерӳ тунипе хавхаланса колхоз уйхирĕсенче вăйа, шеллемесĕр ĕçлерĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине колхозсемпе МТС тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕç, ĕçе йĕркеллĕн тытăнчĕç. Çапла, çанталăк япăх тăнине пăхмасăрах, район çуракине республикăра чи малтан 8 кун хушшинче пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Планпа 11.236 гектар акмалла пулнă пулсан, 11.747 гектар акса хăварчĕ. Агротехника мероприятийĕсене кирлĕ пек пурнăçласа пынă. Çурхи тырăсене сортлă вăрлăхпа акмалли плана районĕпе 115 процент, яровизациленĕ вăрлăхпа акмалли плана 184 процент, тислĕк тăкмалли плана 150,2 процент тултарнă.

1945 çулхи çураки планне тултарассишĕн Чăваш республикинчи районсемпе МТС-сен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă чух, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ пирĕн Вăрнар районне тата МТС-не мала тухнă тесе йышăнса, хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене пачĕç. МТС кунпа пĕрлех Совет Союзĕнчи ытти МТС-сем хушшинче те мала тухса, СССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çавăн пекех çураки вăхăтĕнче ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн республикăри колхозсен социализмлă ăмăртăвĕнче Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз мала тухса ЧАССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çапла çураки итогĕсем тăрăх республикăри куçса çӳрекен пур Хĕрлĕ Ялавсем те пирĕн Вăрнар районĕ аллинче пулчĕç. Çакă вăл пире ялхуçалăх ĕçĕсене малашне тата ăнăçлăрах туса пыма хавхалантарчĕ. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавсене хамăр алăра тытса тăрас тесе, пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем малтанхинчен те хасарлăрах ĕçлеме тытăнчĕç, тырпула лайăх пăхса ӳстерчĕç. Районри колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 14,2 центнер тĕштырă илчĕç. Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 15,6 центнер, Хирпуçĕнчи «Çĕнтерӳ» колхоз 16,8 центнер, Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 15,7 центнер, «Волга» колхоз 14,6 центнер тĕштырă пухса илнĕ.

Тырă вырас вăхăт та пирĕн районри колхозсемшĕн ăнсăртран килсе тухмарĕ. Тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе партипе правительство кăтартса панисене колхозниксемпе колхозницăсем тĕрĕс ăнланса илчĕç. Тырпул пухса кĕртме хатĕрленес, пухса кĕртес, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе çав постановление тĕп программа вырăнне хурса ĕçлерĕç.

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, МТС-па хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксене, МТС-па хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене хамăрăн аслă çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе каларĕç. Хамăр обязательствăра эпир ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма сăмах панăччĕ. Çав сăмаха эпир ăнăçлăн пурнăçларăмăр. Государствăна тырă памалли обязательствăна район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Государствăна тырă памалли плана паянхи куна 106,2 процент тултарнă. Вăрнар районĕнчи колхозниксем çапла пысăк çĕнтерӳ турĕç.

Çавăн пек çĕнтерӳ тăвассишĕн эпир тырă вырма тухнă малтанхи кунсенчех кĕрешме тытăнтăмăр. Государствăна график тăрăх тырă парса пытăмăр. Авăн çапас ĕçре МТС молотилкисемпе пуринпе те туллин усă куртăмăр. Кунсăр пуçне алăпа та çапрăмăр, лашапа та аштартăмăр. Çапнă тырра сăварса тасатас тата типĕтес тĕлĕшпе те ĕçе лайăх организацилерĕмĕр. Колхозсен транспорт бригадисем хатĕрлев пунктне кунĕн-çĕрĕн тырă леçсе тăчĕç. Юлса пыракан колхозсене тырă леçме фосфорит завочĕпе вăрманпромхоз хăйсен автомашинисене парса пулăшрĕç.

Район кăçалхи çĕнтерӳ тырпулне чи кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пулнăччĕ. Ăмăртун çак пунктне те ăнăçлăн пурнăçларăмăр: сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 15.923 гектар çинчи тырпула пĕтĕмпех пухса кĕртрĕмĕр. Тырпул пухса кĕртес ĕçре уйрăм сдельщинăпа тата пĕчĕк ушкăнсемпе ĕçлессине организацилерĕмĕр. Вăл вара ĕçре калама çук пысăк тухăçлăх пачĕ.

Тырă вырнă çĕрте районĕпе 12 комбайн, 100 ытла жнейка ĕçленĕ, 1,200 çын ытла çавапа çулнă. Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра яланах 7 жнейка ĕçленĕ, вĕсемпе куллен 35—40 гектар вырнă. Киров ячĕпе тăракан колхозра тата «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра жнейкăсем пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ. Кунта Митрофановпа Емельянов машиноведсем кулленхи нормăна яланах 150 процент таран тултарса пынă. Ун пек тĕслĕхсене татах та темĕн чухлĕ илсе кăтартма пулать.

Эпир кĕрхи тырăсене те чи лайăх сроксенче тата 90 процентран кая мар ретĕн-ретĕн акса хăварма пулнăччĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара 6.726 гектар акса, кĕрхи тырăсем акмалли плана 102 процент тултартăмăр. Вăл шутран 90,3 процентне ретĕн-ретĕн акса хăварнă.

Пирĕн районри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ирттерес тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе йĕркеллĕ ĕçлерĕç, ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пычĕç.

Çак пĕтĕм ĕçсенче МТС та лайăх ĕçлерĕ, вăл колхозсене кирлĕ пек пулăшса пычĕ. МТС халĕ тракторпа тумалли ĕçсен планне 170 процент, кĕрхи çĕртме тумалли плана 110,3 процент тата комбайнпа тырă вырса пуçтармалли плана 112,8 процент тултарнă.

Районри колхозсем государствăна обязательство тăрăх тырă парса татнă хыççăн, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнчĕç. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, пурĕ 400 тонна пама йышăннă. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçларĕç. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 24.400 пăт тырă пачĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 800 пăт, «Победа» колхоз 937 пăт, Каганович ячĕпе тăракан колхоз 762 пăт, «Самолет» колхоз 1.735 пăт, «Первое мая» колхоз 840 пăт, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1.335 пăт, Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз 2.400 пăт панă.

Колхозсем çĕрулмипе пахчаçимĕççене те вăхăтра пухса кĕртрĕç. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми парас ĕçе 28 колхоз хутшăннă.

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче лайăх ĕçлерĕç. Халĕ авăн çапса пĕтерессишĕн тата вăрлăхлăх курăксене çапса шĕкĕлчессишĕн кĕрешеççĕ. Çав ĕçсем пĕтнĕ хыççăн район ялхуçалăх çулне пĕтĕмĕшпех вĕçлет.

Я. ПЕТРОВ.
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00113 Типография № 1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59x42. 1 п. л. Тираж 10.000 экз.